«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»

# Сан ятупа, вĕрентӳçĕ...



Вĕрентӳçĕ – пуриншĕн те таса сăмах, ун хыççĕнче çĕнтерӳ те, пĕрремĕш çитĕнӳ те. Уçă кăмăл тата пĕлӳ пуянлăхĕ.

«Пĕлӳрен вайлăрах вăй çук: пĕлӳпе хĕç-пăшалланнă çын çĕнтерейми...». Вĕрентӳçĕ профессийĕ пур саманара та хисеплĕ, анчах çав вăхăтрах йывăр та тӳсĕмлĕх ыйтакан ĕç пулнă. Вĕрентӳçĕсем хăйсен çирĕплĕхĕпе тата пĕлĕвĕпе вĕренекенсене хăйсен пĕлĕвне, вăй-халне, опытне параççĕ, çав хушăрах пысăк талант кăтартаççĕ. Вĕрентӳçĕ çинчен С.Л. Соловейчик писатель питĕ тĕрĕс те тӳрĕ çырнă: «Вăл артист, анчах ăна итлекенсемпе куракансем алă çупмаççĕ. Вăл скульптор, анчах унăн ĕçне никам та курмасть. Вăл врач, анчах унăн пациенчĕсем ăна сипленĕшĕн сайра тав тăваççĕ тата яланах сываласшăн та мар. Куллен хавхаланма ăçтан вăй тупмалла-ха унăн? Хăйĕнче çеç, хăйĕн пысăк ĕçĕн ăс-хакăлĕнче çеç». Вĕрентӳçĕ профессийĕ – ĕç те, чун туртăмĕ те.

Вĕрентӳçĕ вăл – хăйне уйрăм профессি. Вăл – этем ăс-хакăлĕн кăткăс тĕнчине яланах, нихăçан та чарăнмасăр кĕрсе пыни. Йĕркеленекен çыннăн ăс-хакăл пурнăçне вăл чи кирлĕ инструментпа – сăмахпа йĕркелет. Вĕренекенĕн хальхи тата пуласлăхĕ вĕрентӳçĕрен килет. Çавăнпа та кашни ачана ăнăçлă воспитани пама май пуррине ĕненни питĕ кирлĕ. Акă мĕн пулмалла хăйĕн пурнăçне вĕрентекен ĕçне халалланă çыннăн чунĕнче, çынна тата унăн пуласлăхне виçесĕр ĕненни. Унăн пурнăç çулĕ – ырми-канми ĕç çулĕ, ăсталăха ӳстерсе пырасси, халăха, шкулпа ачасене чунтан парăнса ĕçлесси. Сăмах пысăк саспаллиллĕ Вĕрентӳçĕ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентӳçи, Муркаш районĕнчи Москакасси шкулĕнче ĕмĕрĕпе математика вĕрентнĕ талантлă Нина Васильевна Васильева çинчен пырать.

Нина Васильевна тесен тӳрех ачасен тетрачĕсем умне тайăлнă вĕрентӳçĕ сăнарĕ тухать. Чăх чĕрнипе вараласа чĕркеленĕ йăнăшсене тӳрлетме, кахал ачасен наянлăхне ывăнмасăр çĕнтерме мĕн чуль чăтăмлăхпа ачасене юратни кирлĕ. Пĕчĕк, йывăр мар, ансат япалана вĕрентсе пĕр урока ирттерме те вĕрентӳçĕн питĕ нумай пĕлмелле, нумай вуламалла, ĕмĕрĕпе çине тăрса вĕренмелле, шырамалла, кирлĕ маррине айккинелле сирсе каллех çĕннине шырамалла. Хăвăнтан çĕнĕ куна тивĕçтерекен çĕнĕ çын тумалла. Эпир ун çинчен ытлах шутласа та каймастпăр, вĕрентӳçĕн ĕçĕ вăл чылай чухне хăвăн çинчен манса ачасене пĕтĕм чуна парса ĕçлени. Кун пек ĕçлени вăл – паттăрлăх. Куçа курăнман паттăрлăх, çул хыççăн çул кашни кун тăсăлакан паттăрлăх вăл пĕтĕм пурнăç тăршшĕпе ырăлăх вăррине акни. Ку, паллах, чаплă, анчах хамăра вĕрентекенсен ĕçне асăрхасах каймастпăр. Ăшă сăмахĕсене те хушăран çеç калатпăр, ытларахăшĕ вара вĕрентӳçĕсен кунĕнче те аса илеймест. Çултаăкра виççĕр кун шкулта ирттеретпĕр, çак вăхăтра кашни кун 6 – 7 сехет вĕрентӳçĕсемпе пĕрле юнашар. Ачасен йăкăлтатăвĕпе, ăнланманлăхĕпе, тӳрккеслĕхĕпе, чурăс чунлăхĕпе кашни кун тĕл пулаççĕ.

Тепĕр ашшĕ-амăшĕн шутласа каламан сăмахĕсем те вĕрентӳçĕн чĕрине амантса тарăн йĕр хăвараççĕ. Вĕрентӳçĕ пулмасан вĕсем кама вĕренсе тухăччĕç-ши? Вĕрентӳçĕ пулмасан никам та тракториста та вĕренсе тухаймĕччĕ. Вĕрентӳçĕн хĕвел шевли пек куллисĕр, унăн çунса тăракан куçĕсемсĕр, ырă чĕрисĕр, ăшă кăмăлĕсĕр çут тĕнче те сутă мар. Çавăнпа та пирĕншĕн юратнă вĕрентӳçĕн ячĕ питĕ хаклă. Кахалсене вăрçса, наянсене ятласа, килти ĕçсене туманнисене япăх паллă лартса парса вĕсем тĕрĕс тăваççĕ, вĕрентӳçĕсем ачасене ырă сунаççĕ-çке. Вĕрентӳçĕ вăл сиксе юлнă сас паллисене вырăна лартма е хушма-кăларма çеç вĕрентмест, вăл çынсене ăнланма, кашни çынна хăйне ăнланма, пурăнма вĕрентет. Апла пулсан хамăрăн юратнă вĕрентӳçĕсем çинчен ытларах пĕлер, вĕсене май пур чухне ырă сăмах калар. Кăçал Педагогпа наставник çулĕнче вĕрентӳçĕсене тав туни ытлашши пулмĕ тесе малалла Нина Васильевнăн ачалăхĕпе паллашар.

**Ешĕл ачалăх, çунатлă çамрăклăх...**

Нина Васильевна Васильева Сĕнтĕрвăрри районĕнчи халĕ Çĕнĕ Шупашкар хулине кĕрекен вырăсла Тоскинеево, чăвашла Тосинкасси ятлă ялта çĕр ĕçченĕсен çемйинче 1936 çулхи кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнче çакă çутă тĕнчене килнĕ. Ашшĕ, Василий Данилович Данилов, колхоз председателĕ пулнă. Амăшĕ Фекла Андреевна Андреева вилличченех, 1984 çулччененех колхозра ĕçленĕ.

Нина 1943 çулта Анаткассинчи пуçламăш шкула пĕрремĕш класа каять. Унăн пĕрремĕш вĕрентӳçи Ефросия Даниловна Данилова пулнă. Вăл питĕ пултаруллă, анлă тавра курăмлă, пур ĕçе те тирпейлĕ тума хăнăхнă çамрăк хĕр пулнă. Класра 50 ача пулнă, вĕсем тăватшар вырăнлă партăсем хушшинче ларнă. Вăрçă вăхăтĕнчи выçăллă-тутăллă пурнăç çинчен тепĕр хут аса илни ытлашши пулмĕ. Ачасем те вăрçă нушине сахал мар курнă. Çавах класри 50 ача пĕр çемьери пек питĕ туслă пулнă. Вĕсене Ефросия Даниловна çырма-вулама вĕрентнисĕр пуçне тĕрлĕ общественăла ĕçе хутшăнтарнă. Акă вăлах ачасене тĕрĕ тĕрлеме вĕрентнĕ. Нинăн тĕррисем уйрăмах питĕ илемлĕ пулса тухнă. Вара вăл ытти ачасене фронтра çапăçакан ашшĕсем валли сăмса тутрисем тĕрлеме пулăшнă.

Тăваттăмĕш класра Нина математикăна кăмăлланине аса илет. Енчен те пĕрремĕш вĕрентӳçи Ефросия Даниловна пулмасан вăл математик пулман пулĕччĕ. Ун çинчен паян та юратса аса илет ахальтен мар ветеран. Тăваттăмĕш класа ăнăçлăн вĕренсе тухсан Нина Янташ ялĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкула куçать. Кайран ку шкулта чăвашсен пĕрремĕш Президенчĕ Николай Васильевич Федоров вĕренет. Шкула лайăх паллăсемпе пĕтерет. Кунтах комсомола кĕрет, паян та комсомол билечĕн номерне астăвать Нина Васильевна – 04208955. Ĕлĕк темшĕн документсен номерĕсене асра тытмалла пулнă. 1953 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи физикăпа математика факультетĕнчи математика уйрăмне вĕренме кĕрет. Кунта вăл чи лайăх студентсен шутне кĕрет. Вĕренӳре пиллĕк паллăсемпе çеç вĕренет. Тепĕр пилĕк çултан математикăпа черчени вĕрентӳçи пулса тăрать.

**Ĕç çулĕсем...**

Аллăмĕш çулсенче чăваш çĕршывĕнче вĕрентекенсем чылай хатĕрленĕ, çавăнпа çамрăк специалистсене Совет Союзĕн ытти çĕрĕсене распределенипе янă. Çапла Нина Васильевна 1958 çулта Курган облаçĕнчи Белозерск районĕнчи Стеклозаводск шкулĕнче математика вĕрентӳçи пулса ĕçлеме пуçăнать. Нина Васильевна пĕтĕм вăйне парса ĕçлеме тăрăшать. Йывăрлăхĕсем вара кашни утăмрах сиксе тухнă. Ĕçлес опычĕ çук, методика литератури çитмен, ачисем те вĕренесшĕн çунман. Нина Васильевна кашни ачашăн пăшăрханнă. Йывăр самантсенче вĕрентӳçĕне ĕçтешĕсем лăплантарма тăрăшнă: «Не плачь, Рыбонька», – тенĕ вырăсла. Аслă юлташĕсем пулăшнипе çамрăк педагог çитĕнекен ăрăва ырăпа усала уйăрса илме, тӳрĕ кăмăллă пулма, аслисене хисеплеме, Тăван çĕршыва юратма кунтан-кун вĕрентет.

Виçĕ çултан Нина Васильевна Тăван çĕршыва таврăнасшăн пулать. Лере вара лайăх вĕрентӳçĕне çухатасшăн мар, ĕç кĕнекине парса ярасшăн мар. Нина Васильевна ниме пăхмасăр Москакасси шкулĕнче ĕçлеме пуçлать. 1961 çултанпа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен хăйĕн пурнăçне çак шкулпа çыхăнтарнă. Кунта вăл ятлă-сумлă, чаплă математика тата черчени вĕрентӳçи пулса тăрать. Унччен вара... ĕç, ĕç, ĕç. Питĕ пысăк кăмăлпа пуçлать вăл çĕнĕ çĕрти пурнăçа. Тăван Тосинкасси ялне Çĕнĕ Шупашкарти хими заводĕн санитари зонине лекнине пула салатса яраççĕ. Нина Васильевна Москакассинче хăйне килти пекех туять. Чăн малтан шкулта ăнăçлă ĕçлеме методика пухмачне пуянлатма тăрăшать: хуласенче тĕрлĕ литература туянать, хаçат-журнал çырăнса илет. Библиотекăсенчен тухма пĕлмест.

Урoксемсĕр пуçне кружоксем те ирттерет, ачасене çĕнĕ тема ăнлантарса парать. Çĕнĕ тема вĕреннĕ чухне ачасен пичĕ йăл кулăпа çиçнĕ, ара вĕсем çакăн пек самантсене тӳсеймесĕр кĕтнĕçке. Вĕсене Нина Васильевна пек вĕрентӳçĕсемпе вĕренме килĕшнĕ.

Вăйлă ачасем задачăсемпе уравненисене çав тери хăвăрт шĕкĕлченине пула Нина Васильевнăн татах та йывăртарах хушма задачисем хатĕрлесе хумалла пулнă. Çакăн пек вĕренекенĕсем хушшинче, тĕслĕхрен, Станислав Филимонов, Рена Федорова, Света Лобастова пулнă. Часах Нина Васильевна патĕнче вĕреннĕ ачасем математика вĕренме аслă шкулсене çул тытаççĕ. Вĕренсе тухсан математик пулса ĕçлеççĕ. Л.Ф. Замятина Çĕрпӳ хулинче ĕçлет, Н.В. Тихомирова – Чуманкасси шкулĕнче, Р.П. Матвеева – Шупашкарта, Т.В. Шерстякова – Оринин шкулĕнче, Света Лобастова Чăваш патшалăх университетĕнче математика вĕрентет, Калерия Порфирьевна Сорокинăпа Нина Ивановна Иванова Москакасси шкулĕнчех хăйсене валли математика вĕрентӳçи ĕçне алла илнĕ.

– Нина Васильевна мĕнпур пушă вăхăтне пирĕнпе ирттеретчĕ, пире вăрмана та илсе кайса тĕрлĕ математика конкурсĕсем ирттеретчĕ, математикăпа иртсе кайнă темăпа зачĕт та тыттаратчĕ. Эпир математикăна класĕпех юратса пăраннăччĕ, вăл хăй те пире килĕштеретчĕ, – тет халĕ Москакасси шкулĕнче математика вĕрентӳçинче ĕçлекен Нина Ивановна. Çапла, Нина Васильевна пĕр çул та класс ертӳçисĕр пурăнман.

Мĕн чуль çынна тĕрĕс çул çине кăларнă вăл. Манмаççĕ ăна, çырусем çырсах тăраççĕ.

«Сывă пурăнатăр-и, Нина Васильевна? Ку эпĕ, Гена. Сире, хаклă вĕрентекенĕм, пĕтĕм кăмăлтан саламлатăп, ырă сывлăх, вăрăм ĕмĕр тата йывăр та пархатарлă ĕçĕрте ăнăçу сунатăп... Ĕнтĕ эсир пире мар, урăххисене вĕрентетĕр. Анчах пурте-пурте ĕнерхи пекех асра, куç умĕнчех.

Астăватăп-ха, иккĕмĕш класра вĕреннĕ чухне мăрсаксем пĕрре питĕ савăнса пырса кĕчĕç шкула: вĕсемпе юнашар çĕнĕ шкул тумалла иккен. Пире, ахманесене, калаççĕ: сире çӳреме инçе пулать. Шкулĕ вара эпĕ университет пĕтернĕ çул тин хута кайрĕ...

Пĕр кана шкул пурнăçне аса илсе лартăм та, ку та ăша килчĕ. Çырса хумасăр тӳсеймерĕм.

Сире тепĕр хут чĕререн саламлатăп, телей сунатăп.

Ырă сунса Гена Дегтярев.

1984 çул. Ленинград».

Кунта хăнăхнă йăлапа хисеплĕ ветеранăн чыславĕсене çырма тытăнас терĕм те, тӳрех калатăп, хут çитмест, вĕсем купи-купипе.

Хисеп хучĕсем, грамотăсем, Дипломсем, Тав хучĕсем, кăкăр сине çакмалли паллăсем, медалĕсем тăваттă таран. 1978 çулта Чăваш АССР тава тивĕçлĕ вĕрентӳçин ятне тивĕçет. Ĕçне кура – хисепĕ. Çапла пулмалла та.

Халĕ Нина Васильевна Юнкă ялĕнче пурăнать, тивĕçлĕ канура.

Эпир сире, Нина Васильевна, çĕре çити пуçа тайса тав сăмахĕ калатпăр. Педагогпа наставник çулĕпе саламлатпăр. Тата мĕн чуль пурăнмалли кунĕсене çирĕп сывлăхпа, ăнăçупа, телейпе пурăнса ирттермелле пултăр, утма çулĕ вăрăм пултăр, хисеплĕ Нина Васильевна, ачасем юратнă вĕрентӳçĕ!

# Хăйĕн ĕçĕнче чăн-чăн специалист пулнă



Атте... Анне... Çывăх тăвансем... Туссем... Вĕрентӳçĕсем... Çак ăнлавсем епле пысăк пĕлтерĕшлĕ пирĕнтен кашниншĕнех. Аттепе аннене пулах эпир çут тĕнчене çуралатпăр, ырлăхне те, хурлăхне те сахал мар тутанса пăхатпăр этемĕн кĕске ĕмĕрĕ вăхăтĕнче.

Хамăра астума пуçласан вĕрентӳçĕн ырă кăмăлне, чун ăшшине, юратăвне туятпăр. Епле пурăннă пулăттăмăр-ши эпир вĕсемсĕр çут тĕнчере! Йывăр хуйхă пулсан та, чун ыратсан та, паллах, вĕрентӳçĕсем лăплантараççĕ пире, пурăнма вăй-хăват параççĕ.

Анчах пурнăç хăш-пĕри патне ытла та шелсĕр çав, çав тери кĕске-çке хăш-пĕр çыннăн ĕмĕрĕ. Çав тери пысăк çухату хыççăн кăна эпир ун пирки чун-чĕрепе ĕмĕрлĕхех туйса илетпĕр, час-часах кулянатпăр, тӳрленми суран чунра йăшкасах тăрать.

Мĕнле йывăр çут тĕнчере çывăх çыннăн çирĕп тĕрекĕсĕр. Шел, упраймастпăр çывăх çынсене. Ĕмĕрех пулччăрччĕ вĕсем пирĕнпе пĕрле. Манас марччĕ вĕсен çутă сăнарне, ырă ĕçĕсене. Ку вăл – чĕррисен таса тивĕçĕ.

Пур çын та шкултан вĕренсе тухнăранпа нумай çул иртсен те ачалăх кунĕсене, хăйсене вĕрентнĕ вĕрентӳçĕсене час-часах аса илет, уйрăмах юратнă вĕрентӳçĕ сăнарĕ асран каймасть.

Юратнă вĕрентӳçĕ тенĕрен, вăл кашни ачан пур пулмалла. Вăл вĕрентекен предметпа вара уроксене те тĕплĕн хатĕрленетĕн, унăн урокĕсенче те тимлĕ ларатăн. Зинаида Игнатьевна Тимофеева вара шăпах нумай ачашăн юратнă вĕрентӳçĕсенчен пĕри пулса юлчĕ те.

Зинаида Игнатьевна Садикова 1959 çулта Етĕрне районĕнчи Орпаш ялĕнче колхозник çемйинче çуралнă. Зинаида Садикова ача чухне ялта вĕрентӳçĕ шутлă çын шутланнă, çавăнпа та вĕрентӳçĕ профессине суйласа илме тĕв тăвать пĕчĕккĕллех. Пурнăçĕ вара çав вăхăтри ытти çынсенни пекех çăмăл пулман. Çитмен пурнăç темĕнле те ташлаттарать – вĕри çатма çинче пĕр тĕрлĕ, шăн пăр çинче тепĕрле.

Пĕррехинче Зинаида, вуникĕ çула та çитмен хĕр ача, пĕччен çĕр улми сутма баржăпа Волгоградпа Астрахане çити каять. Хальхи тепĕр хĕрупрас, вăтăр икĕ çулхи сухаллă арçын ача та, килти кăмака хыçĕнчен телефонран уйрăлса Шупашкарти пасара кайса килеймест. Зинаида вара вунпĕр çулта тĕнче хĕрринчен çĕр улми сутса укçа туса килет. Апла пулин те, Зинаида Садикова вĕренмех тăрăшнă. Орпаш ялĕнчи вăтам шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухать.

Çав çулах Шупашкарти пединститута математикăпа физика факультетне вĕренме кĕрет. 1980 çулта И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи физмат факультетĕнчен вĕренсе тухсан хăйĕн вĕрентӳçĕ ĕçне Москакасси ялĕнчи ача садĕнче воспитательтен пуçлать. Вăл вăхăтра Москакасси шкулĕнче питĕ вăйлă математиксемпе физиксем ĕçленĕ, çамрăк специалист валли вырăн пулман ку вăхăтра. Зинаида хушаматне улăштарма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Вăл юнашар ялти Гена Тимофеева качча каять, вĕсем çемье çавăраççĕ. МСО Тимофеевсене Москакасси ялĕнче хваттер парать. Вĕсем кĕçех Наташа хĕрпе Анатолий ывăл çуратаççĕ. Пурăнмалла та пурăнмалла пĕрпĕринпе савăнса. Шел пулин те, мотоциклпа аварине лексе Гена çамрăклах çĕре кĕрет.

1984 çултанпа Москакасси шкулĕнче ĕçлеме пуçлать. Малтан вăрăмлатнă ушкăнри воспитательте, кайран татти-сыпписĕр математикăпа физика предмечĕсене вĕрентет.

(Вĕçĕ 7-мĕш стр.)

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ»**

# Хăйĕн ĕçĕнче чăн-чăн специалист пулнă

**(Вĕçĕ. Пуçл. 6-мĕш стр.)**

Математика тĕрĕс наука пулнине пурте лайăх пĕлеççĕ. Кунта хăвăрт тавçăрса илме пĕлни те, тарăннăн шутлама пултарни те, çивĕч ăс та кирлĕ. Урокĕсем унăн интереслĕ пулнă. Зинаида Игнатьевна ачасене çĕнĕ темăпа кăсăклантарма пултарнă. Малтанхи урокра вĕрентнĕ темăна кашниех ăнлантăр тесе тĕплĕн тĕрĕсленĕ, кирлĕ пулсан, тепĕр хут ăнлантарнă. Кашни урокра урăх меслетпе усă курни те вĕренекенсене çĕнĕ темăна ăша хывма лайăх пулăшнă. Математика вăййисем те ирттернĕ, вĕрентӳ пахалăхне ӳстерсе пырассишĕн нумай тăрăшнă. Çавăнпа та çĕнĕлĕхсемпе, ĕçтешĕсен опычĕпе паллашсах тăнă. Вуншар ачана хăйĕн предметне юратма хăнăхтарнă вăл.

– Москакасси шкулĕ маншăн тăван кил пекехчĕ, вĕренекенсен, ĕçтешсен хуйхи-суйхи манăн хуйхă-суйхă пулса тăчĕ, вĕсен савăнăçĕ те манăн савăнăçăчĕ, – аса илетчĕ Зинаида Игнатьевна.

Хăйĕн ĕçри вăрттăнлăхĕсене хаваспах çамрăксене уçса панă. Ахальтен мар ĕнтĕ шкулта хисепленĕ ăшпиллĕ вĕрентекене. Хамăра вĕрентекен учительсен тăрăшулăхĕ, ырă кăмăлĕ нихăçан та асран тухас çук.

– Тепĕр чух эпир уроксене хатĕрленсе килмесен те сасă хăпартса кăшкăрмастчĕ. Ачасем, тăрăшса вĕренĕр, хăвăршăн усăллă пулĕ, – тетчĕ пире класс ертӳçи пĕрмаях, – аса илет унăн класĕнче вĕреннĕ Эмилия Ершова. Сăмах май, Эмилия ЕГЭре историпе те, обществознанипе те çĕршер балл илсе Санкт-Петербургри университета юриста вĕренме кĕме пултарчĕ. Качча кайрĕ, халĕ ачипе декрет отпускĕнче. – Юратнă вĕрентекенĕмĕр пур ачапа та пĕр чĕлхе тупма пĕлетчĕ. Вăл ертсе пыракан физика кружокне мĕн чуль ача интересленсе çӳреммен пуль.

Вăл хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен специалист пулнине палăрнă. Кашни çул унăн класри ачасем çирĕп пĕлӳ шайне кăтартнă. Акă 2002 çулта çирĕм пĕр ачаран вуниккĕшĕ аслă шкулсене тӳлевсĕр, бюджет мелĕпе вĕренме кĕнĕ. Кайран ЕГЭпе ОГЭ вăхăчĕ пуçлансан пĕр ачи те экзаменсенче «иккĕ» паллă илни пулман. Çакă мар-и вăл вĕрентӳçĕ ачасене лайăх вĕрентни? Çак тĕслĕх Зинаида Игнатьевна вĕрентӳçĕн пултарулăхĕ, ăсталăхĕ пирки каламасть-и?

Тата акă мĕн тĕлĕнтерчĕ мана. Унăн тăванĕсем çӳлти шайра ĕçленĕ пулсан та, вăл нихăçан та, хăшĕ-пĕрисем пек, çакăнпа усă курса юлас темен. Пурнăçра пурне те хăй тĕллĕн ăнăçтарма тăрăшнă. Хăй çине çеç шаннă. Çамрăклах упăшкасăр юлсан та, çак йывăр вăхăта чăтса ирттерсе, ачисенчен мĕн тери лайăх çынсем çитĕнтерсе тĕрĕс пурнăç çулĕ çине тăратнă. Хĕрарăм пуçĕпе таса уйра çĕр илсе хăй тĕллĕн пӳрт çĕклесе лартнă. Хăйĕн аллипе! Хăйех платник та пулнă, каменщик та, столяр та, маляр та, тата ытти те. Тĕлĕнсе пĕтерме май çук ĕçчен çын пулнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. Ир-ирех пӳртне лартнă çĕртен шкулта чупса çитнĕ те, вĕрентсе пĕтерсен, каллех пӳртне тума чупнă. Чунĕ теме сиснĕ-ши? Ачисем валли кил-çуртне çĕклесе ĕлкĕрес юлас тенĕ-ши? Хăй курнă йывăрлăха ачисем ан курччăр тенĕ-ши?..

Юлашки çулсенче вăл вăйсăрлансах пынă. Шкул ĕçне пăрахма тивнĕ...

...Чулхуларан анализ даннăйĕсем килнĕ. Ку юн чирĕнчен сиплеме хальлĕхе медицина пултараймасть иккен. Медицина вăйсăр. Пурăнмалли тата ултă уйăх çеç юлнă. Çакăн пек хăрушă хыпара илтсен тепри çухалса кайĕччĕ. Ун пекки те пулнă пурнăçра сахал мар. Зинаида Игнатьевна вара пурнăçри çак юлашки çур çула этем пек мĕнле пурăнса ирттермеллине пăхса тухнă. Халĕ те хумханмасăр аса илейместĕн ăна. Зинаида Игнатьевна хăйĕн çинчен мар, хăйĕн ачисен пурнăçне мĕнле лайăхрах йĕркелесе ямалли çинчен шутланă.

Унăн чунĕ халĕ тӳпере ĕнтĕ, унта ырă куртăр ĕмĕр-ĕмĕре.

Зинаида Игнатьевна хăйĕн кĕске пурнăçне чăн этем пек тивĕçлĕ пурăнса ирттернĕ. Вăл кирек епле ĕçе те чун-чĕре хушнă пек пурнăçланă, принциплă пулнă, ыйтусене таса панă чух çине тăнă, организаторла пултарулăхĕпе, çынсене ăнланма тăрăшнипе вĕрентӳ ĕçченĕсем хушшинче тивĕçлĕ авторитет çĕнсе илнĕ.

Зинаида Игнатьевна Тимофеевăн хастар ĕçне пысăка хурса хакланă, ăна РФ Вĕренӳпе наука министерствин грамотисемпе, тĕрлĕ шайри ертӳлĕхĕн Хисеп хучĕпе наградăланă.

Тӳрĕ чунлă ырă çыннăн, Зинаида Игнатьевна Тимофеевăн çутă сăнарĕ вăл вĕрентнĕ ачасемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсен, унпа пĕрле ĕçлеме пӳрнисен чĕрисенче яланах упранĕ. Манмĕ сана ял-йыш, юратĕç яланах тăванусем, хурланса аса илĕç юлташ-пĕлĕшсем. Эсĕ çеç ан асăн вĕсене.

Вăхăт çитиччен...

# Çĕр çинче ырă ят хăварнă



Светлана Александровна Купцова 1961 çулхи кăрлач уйăхĕн 29-мĕшĕнче Хорнуй ялĕнче çуралнă. Ĕлĕкех ку вырăнта вăрман хăртса уй тунă вырăнта темиçе ял та пулнă. Совет саманинче вĕсене пĕрлештерсе Хорнуй ят параççĕ. Тата ял ячĕпе çыхăннă тепĕр легендăна илтнĕ ача чух Светлана. Ку ялти çынсем пур енĕпе те маттур пулнă, услам тума та пĕлнĕ: пĕрисем çуна-урапа туса сутнă, теприсем кунтăк-пĕрме ĕçĕпе аппаланнă, виççĕмĕшĕсем хурăн хуппинчен сăмала юхтарнă. Халĕ чăмлаксене лавккарах сутаççĕ. Эпир ача чух вĕсене хамăрах тăваттăмăр. Ĕлĕк пирĕн асаннесем хурăн хуппинчен чăмламалли сăмала тунă. Ку экологи тĕлĕшĕнчен таса, усăллă продукт тĕрлĕ витаминпа тата минералпа пуян.

Хурăн хуппинчен тунă чăмлакан сăмала уссине медицина та çирĕплетет. Хурăн хуппинчен тунă кавлев шăлсене тасатать тата çăварти ырă мар шăрша пĕтерет. Хурăн хуппинчен тунă тутлă шăршăллă сăмала никама та сӳрĕк кăмăллă хăвармасть. Нумайăшĕ вăл вар-хырăмпа пыршă-пакарта чирĕпе кĕрешме пулăшать, кăкăр хĕртнинчен хăтарать тесе шутлать.

Кукамайсем мĕн авалтанпах хурăн хуппинчен тунă кавлев усăллине пĕлнĕ, çавăнпа та ăна тăвас ĕçе питĕ тимленĕ. Чăмламалли сăмала тумалли тĕп материал – хурăн хуппи. Хуппине çиелти шурринчен, аялти хăмăр сийрен тасатаççĕ, варрине çеç хăвараççĕ. Шăпах ăна пĕçереççĕ те. Светланăн ăна тутанса пăхма шухăш пулнă, хăтланса пăхнă. Мĕн шутлатăр эсир, унăн та ĕç тухнă!.. Çавăн пек маттур та çаврăнăçуллă хĕр ача пулнă Светлана.

1969 çулта пĕрремĕш класа тăван Хорнуй ялĕнчи сакăр çул вĕренмелли шкула вĕренме каять. Кашни ачах хăй вĕренекен шкула юратать, ăна хăйĕн иккĕмĕш килĕ вырăнне шутлать. Кунта вăл халиччен пĕлменнисене ăса хывать, çĕнĕ юлташсем тупать. Светлана Хорьковăна шкулта вĕренме питĕ килĕшнĕ. Пур предметпа та малтисен шутĕнче пулнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех хăйне валли чуна килĕшнĕ ĕç суйласа илет. Вăл – вĕрентекен пуласшăн. Ăна вĕрентӳçĕ ĕçĕ кăмăлне каять.

9 – 10 классене Муркаш вăтам шкулĕнче вĕренет. Хăвăртрах хăй тĕллĕн пурăнас, професси алла илес тата пурăнмалăх ĕçлесе илес кăмăл Светланăна аслă шкула вĕренме кĕме хĕтĕртнĕ. Шкултан вĕренсе тухсан 1980 çулта Иван Яковлевич Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтне вĕренме кĕрет. Кĕçĕн классенчи вĕрентӳçĕ пулса тухни пирки калакан хĕрлĕ диплом алла илсен направленипе малтан Оринин шкулне яраççĕ. Малтанах ачасене итлеттерейместĕр куççулĕпе йĕнисем те, çĕрĕпе сывăрайманнисем те пулнă. Кайран, ĕçе кӳлĕнсен, хăех йĕркене кĕрсе пырать, опыт та пухăнать. Унтан Москакасси шкулне куçса ĕмĕрĕпех çак шкулта тĕпленсе ĕçленĕ.

Çичĕ класпа ĕçленĕ вăл, çĕр аллă ачана вĕрентнĕ. Ывăнма пĕлмен ĕçчен пулнă вăл – педагогика ĕçне чунтан парăннă Светлана Александровна Купцова пирки çапла хăюллăнах калама пулать.

Çитĕнсе пыракан çамрăк ăрăва вĕрентсе тĕрĕс çул çине кăларас ĕçри яваплăха туйса тăнă. Чунне, пĕтĕм вăй-хала шеллемесĕр ачасенчен ырă çын тăвас тенĕ вăл.

Çитĕнекен ăрăва вĕрентес тата воспитани парас ĕçе панă вăтăр çул – Москакассинчи шкулта сахал мар вăхăт. 30 çула яхăн Светлана Александровна пуçламăш классен вĕрентӳçинче ĕçленĕ. Унăн алли-чĕри витĕр сахал мар ача тухнă, вĕсене вăл этемлĕх никĕсне хывнă.

Акă 1985 çулта йышăннă пĕрремĕш сăтăркă кăларăмĕн ачисене сăнланă сăн ӳкерчĕк. Ригăра чĕрене операци тунă хыççăн çак ачасем пурте пĕрле сыватмăша пынине куççулĕпе аса илнĕ Светлана Александровна. Акă алăри сăн ӳкерчĕк çинче 1995 çулхи вăтам шкулти кăларăм. Пĕрремĕш класа мĕне пĕчĕк айванккасем килнине йышăнас та килмест ĕнтĕ вĕсен. Халĕ вара Светлана Александровнăн пĕрремĕш сăтăркăра вĕреннĕ ачасем тăнлă та хитре хĕрсемпе каччăсем куç туллин тăраççĕ. Пурте йĕркеллĕ, тăнлă-пуçлă, сумлă çынсем пулса тăнă, кашнин çинчен уйрăм кĕнеке çырма пулать.

Иккĕмĕш сăтăркăна 1991 çулта илнĕ. Ку класри ачасем питĕ вĕренесшĕн çуннипе асра юлнă. Уроксенче çак тăнлă ачасем питĕ тăрăшса вĕреннĕ.

Виççĕмĕш сăтăркăна 1995 çулта илнĕ. Акă вăл сăн ӳкерчĕк çинче ларакан пĕчĕк Сергей Кириллов, пулас офицер, çар штабĕн начальникĕ. Акă... Пурин çинчен те çырма май çук, статья калăпăшĕ ирĕк памасть. 1999 çулта тăваттăмĕш сăтăркăпа ĕçлеме пуçланă, 2002 çулта – пиллĕкмĕш, 2006 çулта – улттăмĕш. 2010 çулта çиччĕмĕш сăтăркăна тытать, анчах кăларма ĕлкĕреймест. 2012 çулхи ака уйăхĕн пĕрремĕшĕнче унăн чĕри тапма пăрахать. Ăна Турри пурнăçне ытла та сахал татса панă. 50 çул кăна пурăнмалла тунă. Тата мĕн чухлĕ ырă ĕç тума ĕмĕтленнĕ вăл. Çук мĕн, ĕмĕтленни пурте пурнăçа кĕреймен. Çапах та Светлана Александровна тунă ĕç тепĕр темиçе çынна та çитĕччĕ.

Акă, шкулта ĕçленĕ чухнех 1993 – 1998 çулсенче шкулпа юнашар усăнă Пултарулăх çуртĕнче ал ĕç кружокĕсене ертсе пынă. Кунта вăл ачасене пĕчĕк япаласем ăсталама вĕрентнĕ. Тĕрлĕ шкатулкăсемпе теттесем, вĕтĕ, пĕчĕк япаласем унăн шкафĕсенче туллиех пулнă.

Светлана Александровна ачасене вĕрентес тата воспитани парас ĕçре чи лайăх форма вăйă пулни çинчен тăтăшах каласа панă. Пĕчĕк япаласене выляса ăсталанă чух вăйă ача моторикине аталантарма питĕ усăллă. Унта тимлĕхĕ те кирлĕ, чăтăмлăхсăр та ним усси çук, вăйă ĕçченлĕх тупмалли, ачана ĕç тĕлне вĕрентмелли паха меслет пулса тăрать. Çавăн пекех вăйă анлă ориентирование аталантарать, «çӳлте», «аялта», «сылтăмра», «сулахайра» ăнлансене ăнланма пулăшать. Лайăх аталаннă вак-тĕвек моторика ача чĕлхи çине тӳрех витĕм кӳрет. Уроксенче те Светлана Александровна çак меслетпе анлăн усă курнă. Пĕррехинче вĕсем шăрпăк курупкисенчен çур метр çӳллĕш робот кӳлепине тунă. Курупкисем çитмен пирки ăçта пур, çавăнтан пустарма тивнĕ. «Юман çулçи», «Виктори», «Тĕкĕл тура», «Ылтăн пулă», «Тигр çури» ятлă кăранташ хумаллисем туса парта çине лартса усă курнă. Паллах, хăйсен ĕçĕсене тĕрлĕ шайри куравсене тăратнă, выставкăсенче, ăмăртусенче çĕнтерсе тавраннă.

Акă тата шкулти музыкăна вĕрентекен Анатолий Валерианович Макаров çырнă «Выртмара» спектакльпе йĕри-таврари ялсене çӳренĕ. Вăл курăмпа ачасем мĕн чуль савăнăç тупман пуль? Муркаша, Элĕк районне кайса килнĕ. Виççĕмĕш сăтăркă ачисемпе «Çĕнĕ кайăк» спектакль хатĕрлени, тăваттăмĕш сăтăркă класĕпе – «Чапаевпа тĕл пулни». Паян кун та унăн вĕренекенĕсем Надежда Сурикова, Инесса Осипова, Катя Ефимова, халĕ акăлчан чĕлхин вĕрентӳçинче ĕçлекен Светлана Юрьевна Петрова çав вăхăтсене ăшшăн аса илеççĕ.

– Эпĕ Светлана Александровнăпа çирĕм пилĕк çул пĕрле ĕçленĕ, сахал мар тĕл пулса калаçма тӳр килнĕ. Вăл питĕ ăслă шухăшсем калатчĕ те эпĕ унăн сăмахĕсене хут çине çыраттăм, – аса илет асăннă шкул учителĕ Олег Тарасов. – Ватă çынсем çакăн пек калаçнине час-часах илтме пулать, – калаçăва пуçлатчĕ Светлана Александровна хăйĕн сăмах çăмхине сӳтнĕ май. – Хальхи ачасем телейлĕ вăхăтра çуралнă. Мĕншĕн эпир каярах çут тĕнчене килмен-ши? Çĕнĕрен çуралса çитĕнес пулсан, мĕнле пурăнмаллине пĕлĕттĕмĕр... Паллах, ĕлĕкхипе хальхи пурнăçа пĕр виçепе танлаштарма май çук. Хамăр куç умĕнчех пурнăç улшăнса, лайăхланса пырать. Сăмахран, пĕр вăтăр çул каялла ялсенче телевизор пур çемьесене алăри пӳрнесем çинче шутлама пултарнă, халĕ кашни пӳлĕмре «сенкер экран». Вучахра вут чĕртмесĕрех газ плити çинче апат-çимĕç пĕçеретпĕр, кашни килте компьютер, алăсенче смартфонсем... Ĕлĕкхи вăхăтра ял хуçалăхĕнчи нумай ĕçе пурнăçлама ачасене явăçтарнă пулсан, паян чылай алă ĕçне техника, оборудовани ылмаштарчĕ. Ĕлĕк ялта хĕлĕн-çăвĕн пуртă-мăлатук сасси янăраса тăратчĕ – халĕ пур çĕрте те дрель, шуруповертка, тĕрлĕ мотор сасси... Пурнăç лайăхланса пынипе пĕрлех ачасем те улшăнса пыраççĕ. Халĕ вĕсем хаваслă, сывă, тутă, хăюллă, тавçăрулă, ăслă, пысăк тавра курăмлă. Пĕтĕмĕшле каласан, вĕсенче юн вĕресе кăна тăрать. Çавăнпа пирĕн те, хальхи вăхăтра вĕрентӳ тытăмĕнче тăрăшакансен, вунă е ытларах та каяллахи ĕç виçипе, тытăмĕпе пурăнма май çук.

Питĕ ăслă сăмахсем. Паллă ĕнтĕ, шкулсенчи вĕрентӳçĕсен çĕннине, паянхи вăхăт ыйтаканнине ĕçе кĕртме тăрăшмалла, ачасене класс тулашĕнчи ĕçсене анлăн явăçтармалла. Пуриншĕн те паллă ĕнтĕ, вĕрентекенĕн шкулпа класс тулашĕнчи ĕçсем нумай енлĕ: кружоксен ĕçĕсене йĕркелесси; литература каçĕсемпе вулавĕсем, конференцийĕсем ирттересси; тĕрлĕ выставка кĕтесĕсем ăсталасси; тĕрлĕрен конкурссем (пăхмасăр сăвă калакансен, сочинени çыракансен) пуçарасси; стена хаçачĕсем, компьютерпа литература журналĕсем кăларасси; тăвансен, ялпа шкул, тăван ен историне тĕпчесси; тĕпчев ĕçĕсем туса пырасси. Тăван шкулти класс тулашĕнчи ĕçсене еплерех йĕркелесе пынине тата мĕнле ĕçсем тунине асăнса та çитерейĕмĕн. Ĕçтешсемпе чылай çул пĕрле ĕçлесе, Светлана Александровна шкулти уявсене интереслĕ тума тăрăшнă.

Вĕрентӳçĕсем Москакасси Культура çуртне те хаваспах çӳренĕ: спектакльсем лартма, юрă-ташăпа савăнтарма. Пултарулăхпа кӳршĕ ялти çынсене те паллаштарнă.

Çемье Светлана Александровнăшăн малти вырăн йышăннă. Хăйĕн пулас мăшăрĕпе хĕр пĕр ялтах çуралса ӳснĕ, çавăнпа çамрăксем çывăхрах паллашиччен пĕр-пĕрне пĕлнĕ темелле. Кашни курмассерен çамрăксем пĕр-пĕрин кăмăл-туйăмне çывăхрах пĕлнĕ, мĕнпе интересленнипе кăсăкланнă, асăрханă... Ахăртнех, çав вăхăтрах таса та ăшă юрату туйăмĕсем çуралнă пулмалла. Çак хĕрӳ туйăмсем ăна ялти Вячеслав Купцовпа çыхăнтарнă. Вĕсем пĕр-пĕрне куç хывнă та хăйсен çемье романне çырма пуçланă. Чипер хĕре ун чухнехи йăлапа арăм тунă, çирĕп çемье йĕркеленĕ. Хăйсем çуратнă Олеся хĕрне йĕркеллĕ ӳстерсе çитĕнтерсе ырă ятлă çынна кăларнă. Вĕсем Светлана Александровнăн тепĕр ĕмĕтне пурнăçа кĕртнĕ: чаплă та хăтлă кермен туса лартнă. Халĕ Светлана Александровнăн икĕ мăнукĕ çемье историне тăсаççĕ.

Светлана Александровнăна педагогика ĕçĕнче хăйĕн тивĕçне чылай вăхăт тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăшăн шкул администрацийĕн, районти вĕренӳ пайĕн, РФ Вĕренӳ министерствин чылай наградипе чысланă. Ăна «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕççынни» ят та панă.

Чи пахи, паллах, вĕренекенĕсемпе ĕçтешĕсем ĕмĕрех асăнса тав тăваççĕ ăна.

**«Педагогсемпе наставниксем – Муркаш çĕрĕн мухтавĕ» проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**